# К. В. ИВАНОВ – ЧĂВАШСЕН ПРОФЕССИЛЛĔ КĔНЕКЕ ГРАФИКИНЕ ПУҪАРСА ЯРАКАНĔ

«Нарспи» поэма пичетленсе тухнăранпа 100 ҫул тата И. Я. Яковлев ҫуралнăранпа 160 ҫул ҫитнĕ май унăн вĕренекенĕн тата вилĕмсĕр поэма авторĕн К. В. Ивановăн ятне уйрăмах пысăк тимлĕх уйăратпăр. Вăхăтсăр пурнăҫран уйрăлнă талантлă поэтăн литература эткерлĕхне тĕпчени чăваш искусствоведенине пуянлатать, нумай ĕҫсем ҫырма хистет. Литература пултарулăхĕ – К. Ивановăн нумай енлĕ таланчĕн пĕр енĕ кăна. Кун ҫинчен Д. Д. Данилов, А. И. Иванов-Ехвет, И. А. Зотов, В. П. Станьял, А. А. Трофимов тата ытти тĕпчевҫĕсем те каланă. Анчах та К. В. Иванова художник пек паянхи куна ҫити чăнласа тĕпчеймен-ха.

Константин Ивановăн юлташĕ И. С. Максимов-Кошкинский ун ҫинчен ҫапла калани пур: «Эпир унпа иксĕмĕр те ӳнер пултарулăхне кăмăлланипе паллашрăмăр. Константин Васильевич пултаруллă художникчĕ. Мĕн виличченех вăл Ӳнер Академийĕнче вĕренесси ҫинчен ĕмĕтленчĕ» [5, 59].

К. Иванов лайăх ӳкернине унпа пĕр парта хушшинче ларнă С. Н. Алексеев та çирĕплетет: «Рисовани урокĕсене Ӳнер Академинчен вĕренсе тухнă Некрасов преподаватель ертсе пыратчĕ. Пĕрре вăл пирĕн парта патĕнче чарăнса тăчĕ. Константин листине илчĕ, пăхрĕ, унăн шухăшлă сăнĕ кăмăллă кулăпа çуталчĕ. Константин чăнах та питĕ ăста ӳкернĕччĕ, чăн-чăн художник пек» [9, 51].

Маларах асăннă преподаватель Н. Ф. Некрасов, Мускаври ӳнер, скульптура тата архитектура училищинче вĕреннĕскер, ачасене мĕн курнине ӳкерме кăна мар, ӳнер ăнлавĕсемпе шухăшлама, иртнĕ ĕмĕрсен эткерлĕхне тĕпчеме вĕрентнĕ. «Пĕррехинче эпĕ Константин Васильевича рисовани учителĕ Н. Ф. Некрасов патĕнче куртăм, – аса илет С. А. Лашман. – Костантин Некрасовпа хĕрсех пуплетчĕ. Çапла вĕсем иртнĕ ĕмĕрсен мухтавлă художникĕсем Микеланджело, Рафаэль, Тициан çинчен хавхаланса калаçатчĕç» [5, 59].

К. Ивановăн ӳнер искусствинчи пултарулăхне пĕрремĕш хут А. Г. Григорьев искусствовед тĕпчеме пуçланă. «Поэт ӳкерчĕкĕсем учебниксем валли кăна ӳкернĕскерсем пулнă пулин те, художник, кунпа çырлахмасăр, хăй умне кăткăс тĕллевсем лартать, ӳкерекен çынсен шалти тĕнчине палăртма, вĕсен шухăшне тата туйăмне ăнланма, уçса пама, чăвашсен чунпа чĕре илемне кăтартса пама тăрăшать. К. В. Ивановăн сыхланса юлнă ĕçĕсем хушшинче кăрандашпа, кăмрăкпа, перо-тушьпа ӳкернĕ ӳкерчĕксем, çуллă сăрăпа сăнарланă портретсем пур. Çавăн пекех вăл спектакльсем валли декорацисем ӳкерни тата кĕнекесем валли иллюстрацисем туни паллă» [3, 129].

19-мĕш ĕмĕр вĕçĕ – 20-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕ чăваш халăхĕн историйĕнче çĕнĕ чăваш çырулăхĕ çуралнипе, тăван чĕлхепе ӳкерсе илемлетнĕ пĕрремĕш букварь тухнипе палăрса тăрать. 1912-мĕш çулта К. Иванов йывăр кăмăлпа пысăк поэзирен пăрăнать те Иван Яковлевич Яковлев ертсе пынипе хатĕрленĕ «Чăваш букварьне» тимлесех илемлетме пуçлать. И. Я. Яковлев хăйĕн йышлă вĕренекенĕсем хушшинчен çак ĕçе пурнăçлама Константина суйласа илнинчен ним тĕлĕнмелли те çук, мĕншĕн тесен ку вăхăт тĕлне вăл чăн-чăн художниках пулма ĕлкĕрнĕ. Çапла вара вилес умĕн виçĕ çул маларах çамрăк поэт «Вулама тата çырма вĕрентекен вырăс саспаллисем хушнă чăвашсен çĕнĕ букварьне» илемлетес ĕçре тăрăшнă.

«Чăвашсен букварĕ» ӳкерчĕксемпе илемлетнĕ пĕрремĕш чăваш кĕнеки пулнă-ши?» текен ыйту кăларса тăрататъ А. И. Иванов-Ехвет, анчах та ун çине пĕр енлĕ хурав памасть [8, 54]. А. Г. Григорьев асăрхаттарать: «...К. В. Иванов ӳкернĕ Букварь, хăш-пĕр критиксем каланă пек, чăваш графикин «ашшĕ», унăн «çуралнă кунĕ» тенипе асăрханулăрах пулмалла», тет [3, 138]. «Графика» термина ăнлантарнине хăть мĕнле словарьте те тупма пулать – ку вăл мольберт çинче кăрандашпа, кăмрăкпа, акварельпе ӳкернĕ е уйрăм станок çинче çапса пичетленĕ ĕç, плакат, журнал, кĕнеке тата ытти пайсенчен тăракан ӳнер искусствин пĕр енĕ. Çакна шута илсен, А. Григорьев тĕрĕс каланине палăртмалла,

К. Ивановăн ĕçĕ *чăваш кĕнеке графикин* «çуралнç кунĕ» пулса тăрать, мĕншĕн тесен унччен малтан чăваш кĕнекисем пичетленсе тухнă пулин те, вĕсене иллюстрацисемпе илемлетмен, вырăс ÿнерçисен репродукцийĕсемпе е вĕсен копийĕсемпе илемлетнисем пулнă, ку вăхăт тĕлне хăш-пĕр художниксем тунă графика ĕçĕсем кĕнеке графики шутланмаççĕ [3, 138]. Çапла вара Константин Васильевич Иванов профессиллĕ кĕнеке графикинчи пĕрремĕш чăваш художникĕ шутланать.

К. Иванов илемлетнĕ букварьте пурĕ çирĕм виçĕ иллюстрации. Пĕтĕмĕшле илсен, кĕнекери ÿкерчĕксене пĕр стильпе тумалла пек. Анчах та К. Иванов ÿкерчĕксене икĕ стильпе усă курса ÿкернине палăртмалла, йĕр туртса ÿкернисем тата калăпăшлă-лаптăклă ÿкернисем. Кĕнекепе ĕçленĕ чухне художник хăй умне мĕнле тĕллев лартнă-ши? К. Иванов, хăй рисовани учителĕ пулнă май, ку вăхăт тĕлнелле ача-пăча ăнлавĕн уйрăмлăхĕсене, вырăс букварĕсене илемлетнĕ художниксен ĕçĕсене тĕпченех ĕнтĕ [3, 138]. Çакна пула вăл ача ăнланмалла тата ун «чунне пăлхатма пултаракан» ансат чĕлхе тупма пултарнă.

Кĕнеке тексчĕпе унти ÿкерчĕксем пĕр çыхăра пулнине хальхи вулакан хăнăхса çитнĕ, кĕнеке хăйĕн аталану çулне утса тухни çинчен, тен, шухăшламасть те пулĕ вăл (мирискуссниксене, авангардистсене, Е. А. Кибрика, Д. А. Шмаринова, В. А. Фаворскине тата ыттисене аса илер). Анчах та 20-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче авторсемпе издательсем кĕнекен ÿнер пахалăхĕ пирки мар, ытларах ĕçе йÿнеçтересси çинчен шухăшланă. Букварь иллюстрацийĕсем тĕрлĕрен пулнă пулин те, К. Иванов йĕр туртса тунă тата калăпăшлă-лаптăклă ÿкерчĕксен килĕшÿлĕхне тупнă.

Букваре калăплаканĕ Иван Трофимович Трофимов пулнă, анчах та унăн ячĕ те, художникăн ячĕ те кĕнекере çук. Хăйĕн аса илĕвĕнче Трофимов Ивановпа пĕрле ĕçлени пирки çапла калать: «Константин Васильевич букваре пуянрах илемлетесшĕнччĕ, çавăнпа букварĕн хрестоматиллĕ пайĕ валли пахалăхлă ÿкерчĕксем турĕ. Каллиграфиллĕ çыру тĕслĕхĕсене те хăех хатĕрлерĕ. Ÿкерчĕксене кирлĕ шая çитерсен эпир вĕсене Иван Яковлевич аллине патăмăр» [9, 56].

И. Трофимов çырса хăварнинчен эпир тата çакна пĕлетпĕр: художник букварь валли ятарласа «Çумăр» тата «Урапа» юрăсен сăмахĕсене юсанă, çавăн пекех «Чĕкеç», «Çарăк» тата «Çулталăк хушши» сăвăсене чăвашла куçарнă.

К. Ивановăн кĕнеке илемлетнĕ чухнехи ĕçне çырса кăтартнă май букварен пĕрремĕш страницинче вырнаçтарнă çыру хăнăхтарăвĕсен прописьне, çирĕм иккĕмĕш страницăри алăпа çырнă алфавита тата çинçе решеткене чалăшшăн вырнаçтарнă сăмахсене çырмалли тĕслĕхсене те асăрхамасăр хăвармалла мар. Кунта çамрăк художник илемлĕ почеркне тата вăл тушь-перопа, уйрăмах каллиграфиллĕ кăткăс шрифтпа ăнăçлă ĕçлеме пултарнине курма пулать: пусарах çырнă йĕр çемçен çинçе йĕре куçать, илемлĕ те çирĕп кукрашкапа вĕçленет (1 ÿк.).



1 ўкерчĕк

Букварьти иллюстраци материалĕсене тĕпченĕ май унăн пĕрремĕш страницисем интереслĕ пулнине палăртмалла, пĕр страницинче автан, нăрă, упа, шапа тата рак, тепĕр страницинче ватă çын, лаша ўкернĕ. Автанпа нăррине уçăмлă контурпа ўкернĕ пулсан, лаша ўкернĕ чухне йĕрсем кăткăсланаççĕ. Автор çинçе те кĕске йĕрпе лаша сăнарне ăнăçлăн кăтартнă. Унăн çилхипе хўри çилпе выляççĕ. Çавăн пекех лаша ўкернĕ чухне унăн хускалман кўлепинег тата ăна айккинчен кăтартнине пĕчĕк вулакан лайăх ăнланать.

Упине вара пач урăхла ўкернĕ: вăл, çын евĕр, хыçалти икĕ ури çинче тăрать. Çавнашкал ўкерни чăваш халăх юмахĕсемпе халапĕсенче упана вăйлă та ăслă чĕрчун пек кăтартнинчен те килнĕ пулĕ. Ўкерчĕке тĕссене шута илсе тĕплĕн ўкернĕ, кунта чĕрчун çăмне аса илтерекен вĕтĕ йĕрсемпе нумай усă курнă (2 ўк.).



2 ўкерчĕк

Çыран хĕрринчи çўллĕ мар курăк хушшинче ларакан пĕчĕк шапана та художник çак мелпех ўкернĕ.

Ватă çын та кăткăс хусканупа тĕрлĕ мелсене пула (тĕксĕм сăн, сухал, алăри туя, хулпуççи урлă çакнă çĕклем) хăйне евĕрлĕ пулса тухнă. Ку вăл çутăпа тĕттĕм тĕссене (светотень) ансатлатма, ытларах контурсене тимлеме пулăшать ахăртнех. Хăть мĕнле пулсан та, ку ўкерчĕк ача ăс-тăнĕшĕн кăткăс та пĕр енлĕ мар.

Иккĕмĕш мăшăр страницăра тăватă иллюстрации, вĕсенчен чи интересли – сысна ўкерчĕкĕ. Килти выльăх-чĕрлĕхе ўкернĕ чухне художник пĕр мелпе усă курнине палăртмалла: сыснана, лашана, тихана, сĕт çиекен кушак çурине, улăхра çўрекен ĕнене йăлтах

илемлӗ ҫемҫе контурсемпе ӳкернӗ, шӑнӑрсене палӑртма ҫӑмӑл штрихсемпе усӑ курнӑ. Кун пек ӳкерни ачасене ӑнланмалла пулса тухнӑ, ҫав вӑхӑтрах вӑл К. Ивановӑн ӳнер ӗҫӗсен илемлӗхне тата эстетика пахалӑхне пӗрре те чакармасть (3 ӳк.).




3 ӳкерчӗк

Хачча йӗрпе ӳкерни «х» сас паллине, ҫурлана «ҫ» сас палли пек кӑтартни ҫак сас паллине асра хӑварма пулӑшать (4 ӳк.). Ансатлатас тӗллев пулнӑран, художник тулли миххе ҫутӑпа тӗксӗм (светотень) тӗссемсӗр ӳкерет, ун ҫинчи хутламсемпе путӑксене кӑшт кӑна кӑтартса хӑварать.




4 ӳкерчӗк

Витрене К. Иванов туллин, ҫутӑпа тӗксӗм тӗссемпе усӑ курса ӳкерет. Тепӗр мӑшӑр страницӑра ӳкернӗ тукмака та вӑл ҫак мелпех кӑтартать, йывӑҫ ҫинчи ҫурӑксене вӗтӗ йӗрсемпе палӑртать. Пуртта вӑл ансат ӳкерет – контур лайӑх палӑрать, штрих кӑшт кӑна.

Тӑваттӑмӗш мӑшӑр страницӑра икӗ иллюстраци, маларах асӑннӑ кушак ҫури тата ӑса; вӗсене хачӑ, автан тата нӑрӑ ӳкернӗ чухнехи пекех контурсемпе кӑтартнӑ.

Тепӗр иллюстраци пысӑках мар пейзажа аса илтерет – кӗсменҫӗ ҫыран хӗррипе кимӗпе ишсе пырать. Художник ятарласа ку ӳкерчӗке ҫинҫе рамкӑна илет, ҫапла майпа композици пулнине палӑртать; вӑл вара виҫӗ пайран тӑрать: шурӑ пӗлӗт, кимӗпе кӗсменҫӗ. Хура тӗспе ӳкернӗрен вӗсем пӗр-пӗринпе ҫыпӑҫса ларнӑ пекех курӑнаҫҫӗ. Шывӗ вӗтӗ хумсемпе витӗннӗ.

Хура эрешмене хӑй тӗртнӗ эрешмен карти варринче ӳкерсе кӑтартнӑ. Ана тушьпа тӳрӗ йӗрсемпе ӳкернӗ, вӑл ӗненмелле пулса тухнӑ. Турат ҫинче ларакан тӑманана та художник тӗплӗ сӑнланӑ: миниатюрлӑ, ювелирлӑ штриховкӑсемпе ӳкернӗ витӗр пӑхан куҫҫем, вӗтӗ тӗк, тӗксӗм ҫунатсем. Ҫавӑн майлах, анчах та кӑшт йӗркесӗртерех тунӑ штрихсемпе йытӑ ҫӑмне ӳкернӗ, унӑн савӑк

кăмăлне палăртакан хусканăвĕ тата вăл хуçине хăйĕн «аллине» пама хатĕрри ачасенче ырă кăмăл-туйăм çуратаççĕ. Ку юлашки иллюстрации, апла пулин те кунпа букварь вĕçленмест-ха. Малалла – пысăках мар калавсем, сăвăсем тата «вырăс пайĕ».

К. Иванов иллюстрацийĕсене А. И. Иванов-Ехвет тата А. Г. Григорьев тĕпченĕ. Иккĕшĕ те ӳкерчĕксем эмоцилле те ансат пулнине палăртнă. Ку статьяра пĕрремĕш хут букварьти иллюстрацисене, вĕсен пахалăхне тата художникăн ăсталçхне тĕплĕн тĕпчене. Чăнчăн маçтăр аллине кăна парăнакан вĕтĕ те тирпейлĕ штриховка тата илемлĕ йĕрсем К. Ивановăн ĕçченлĕхĕпе тирпейлĕхне кăтартаççĕ, вăл лайăх вĕреннине, тăтăшах ĕçленине тата унăн талантне палăртаççĕ.

К. Ивановăн пултарулăх эткерĕнче ӳнер искусствин ĕçĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Апла пулин те вĕсене искусствоведсем çителĕклĕ тĕпчемен. К. Ивановăн ĕçне наци пулăмĕ тесе хак панă чухне çак ăнланмалла мар япала пушшех те куçкĕрет. А. Г. Григорьев искусствовед урăхла тесе çирĕплетет пулин те, унпа килĕшме йывăр [3, 138]. Художник мĕн ачаран тăван çĕр çинче курса-туйса ӳснĕ чăнлăха ӳкернĕ. Мĕнле-ха çакăн пек ĕç «наци пулăмĕ» ан пултăр, енчен те чăваш халăх ывăлĕ, ĕмĕрсем хушши патшапа ун таврашĕсем тĕттĕм, искусствăна ăнланма пултарайман тесе шутланă халăх ывăлĕ, кивĕ стереотипсене çĕмĕрсе-ватса çамрăклах пултарулăхра çӳллĕ шая çĕкленме пултарайнă пулсан? Çак тĕлĕнмелле вăхăт хăй те наци пулăмĕ пулнă, çавăнпа та вăл вăхăтра пурăннă кашни çынах чăваш халăхĕн, унăн культурин тата вĕрентĕвĕн аталанăвне хăйĕн пурнăçĕн тата пултарулăхĕн тĕпне хывнă.

Пирĕн К. Иванов питĕ сахал пурăннишĕн кулянмалла тата вăл хăй хыççăн мĕн тери пуян пурлăх хăварнинчен тĕлĕнмелле. Ăна чăвашсен профессиллĕ кĕнеке графикине пуçарса яраканĕ тесе хакламалла. Çак искусство аталанăвĕнче тĕрлĕ самантсем пулнă, анчах та унăн пуçламăшĕнче кам тăнине çитес ăрусен астумаллах. Енчен те К. Иванов хăйĕн ĕмĕтне пурнăçлайнă – Ӳнер Академине вĕренме кĕнĕ пулсан – паян ăпир ăна аслă поэт пек кăна маар, талантлă художник пек те пĕлнĕ пулăттăмăр.

ЛИТЕРАТУРА


1. *Герчук, Ю. Я.* Художественные миры книги / Ю. Я. Герчук. – М. : Книга, 1989. – 239 с.

2. *Григорьев, А. Г.* К. В. Иванов и художники Чувашии / А. Г. Григорьев // Классик чувашской поэзии : сб. статей, посвященных 75-летию К. В. Иванова. – Чебоксары : Чуваш. кн. изд-во, 1966. – 219 с.

3. *Григорьев, А. Г.* Сто тысяч красок / А. Г. Григорьев. – Чебоксары : Чуваш. кн. изд-во, 1967. – 82 с.

4. *Данилов, Д. Д.* К. В. Иванов: жизнь и творчество / Д. Д. Данилов. – Чебоксары : Госиздат ЧАССР, 1940. – 31 с.

5. *Зотов, И. А.* Художественный мир Константина Иванова / И. А. Зотов. – Чебоксары : Чуваш. кн. изд-во, 1979. – 72 с.

6. *Иванов, К. В.* Собрание сочинений / К. В. Иванов. – Чебоксары : Чуваш. кн. изд-во, 1957. – 452 с.

7. *Иванов-Ехвет, И. А.* По следам находок / И. А. Иванов-Ехвет. – Чебоксары : Чувашкнигоиздат, 1977. – 112 с.

8. *Константин Иванов.* Фотоальбом. – Чебоксары : Чуваш. кн. изд-во, 1990. – 135 с.

9. *Трофимов, А. А.* Искусство. Избранные труды / А. А. Трофимов. – Чебоксары : ЧГИГН, 2005. – 604 с.